ХЫПАР

Чăваш ачисен хаçачĕ

# Тантăш

Хакĕ ирĕклĕ
Индексĕ: 54802



1931 çулхи кăрлачăн (январĕн)
12-мĕшĕнче тухма тытăннă

6+

4 (4521) №, 2017, нарăс (февраль), 2



**КИРЕК ХĂÇАН ТА ПУЛĂШМА ХАТĔР**

*Сĕрпӳ районĕнчи Апакасси шкулĕнче вĕренекенсене çамрăк пушарнăйсен ретне илнĕ*

2 стр.



**ТĂХХĂРМĔШ КЛАСРАН ВĔРЕНСЕ ТУХАКАНСЕМ САМАХПА КАЛАСА ЭКЗАМЕН ТЫТĔÇ**

*Кăçалтан хăш-пĕр регионта пулĕ. Виçĕ çултан – пур çĕрте те*

3 стр.



**ВĂРÇĂ АХРĂМĔ**

*"Ах... Вера аппан питне виçĕ йĕкехӳре кăшлать. Тăпăлтарассĕ кăна"*

6 стр.

# Ял пурнăçне кăмăллакан Типшĕм Андрей



Шупашкарта пурăнакан Андрей çулталăкăн кашни вăхăчĕпе кăмăллă. Хĕлле сивĕрен хăраманскер тăвайккинчен ярăнать. Кĕркунне вăрманта сарă, хĕрлĕ, симĕс çулçăсем пуçтарма ухута. Çуркунне хĕвел ăшшинче тумла пăт-пат тумланине, кайăксем савăнăçлăн чĕвĕлтетнине, çырмасенче шарласа шывсем юхнине итлесе хĕпĕртет. Çулла çитсен вара юрла-юрла пĕчĕк кутамккине теттисене чикет те яла, кукамăшĕпе кукашшĕ патне, Елчĕк районĕнчи Курнавăшаваскать.

4 стр.

# Кирек хăçан та пулăшма хатĕр

**Çĕрпӳ районĕнчи Апакасси шкулĕнче 5-7-мĕш классенче вĕренекенсем çамрăк пушарнăйсем пулса тăчĕç. Çак мероприяти Раççей МЧСĕн тытăмĕнчи Гражданла хӳтĕлев çулталăкĕпе килĕшӳллĕн иртрĕ.**

Салтак пек тӳрĕ тăракан хĕрачасемпе арçын ачасем пушара хирĕç хастар кĕрешме, ыттисене хăрушсăрлăх правилисене вĕрентме, сынсене хӳтĕлеме тантăшĕсен умĕнче тупа турĕç. Тĕп управленийĕн начальникĕпе Станислав Антоновпа ВДПО председателĕ Светлана Сергеева çамрăк пушарнăйсен билечĕпе чыслани уйрăмах хумханулла самант пулчĕ вĕсемшĕн.

– Паян эсир пирĕн çамрăк пулăшусăсем, шкулшăн тата юлташăрсемшĕн тĕрек пулса тăтăр. Иккĕленместĕп – инкеке лекнĕ çынна яланах пулăшма пултарăр эсир! Пурин умĕнче те калана тупа сăмахĕсене асра тытасса шанатпăр, – терĕ Станислав Антонов. Вăл ачасене çирĕп сывлăх, вĕренӳре çитĕнӳсем сунчĕ.

Хĕрачасемпе арçын ачасем те парăмра юлмарĕç – генерала хăйсем ӳкернĕ агитаци плакатне парнелерĕç.

Кăмăллă кĕтменлĕхсем те савăнтарчĕç вĕренекенсене. Мускавра ачасемпе çамрăксен хушшинче пушар хăрушсăрлăхĕпе иртнĕ Пĕтĕм Раççейри «Тĕнче пирĕн алăра!» ăслăлăхпа практика конференцине пĕтĕмлетнĕ. Унта Апакасси шкулĕн вĕренекенĕсем те хутшăнса призерсен йышне кĕнĕ. Ксения Соколовăпа Полина Васильева Хисеп грамотине тивĕçрĕç. Маттурсем!

«Пламя» ансамбль шăрантарнă такмаксемпе юрăсем пухăннисемшĕн чăн-чăн парне пулчĕç.

Кунпа кăна вĕçленмерĕ-ха мероприяти. Ăна «Асăрханăр – çулăм!» пушар хăрушсăрлăхĕн урокĕ малалла тăсрĕ. МЧС тата ВДПО ĕçченĕсем «Пушарнăй тумтирне кам хăвăртрах тăхăнать?» вăйă, тематикăллă викторина ирттерчĕç. Ачасем пĕр-пĕринпе ăмăртмалла ыйтусене хуравларĕç, кăмăлтан тупăшрĕç.

Çак кун чăннипех те асра юлчĕ. Вĕренекенсем йывăр та пархатарлă профессисенчен пĕринпе тĕплĕнрех паллашма пултарчĕç. Пурнăçра хуть те мĕнле професси суйласан та вĕсем инкеке лекнĕ çынна яланах пулăшма васкĕç.

*Нина ЦАРЫГИНА.*



**КОНКУРС**

# «Герб, ялав, гимн – пирĕн пуянлăх»

**Чăваш Республикин патшалăх символĕсене йышăннăранпа 25 çул çитнĕ май кăрлач уйăхĕн 25-мĕшĕнчен пуçласа ака уйăхĕн 20-мĕшĕччен республикăри ачасемпе çамрăксен библиотеки «Герб, ялав, гимн – пирĕн пуянлăх» республика пултарулăх конкурсĕ ирттерет.**



Çак конкурс ачасемпе çамрăксене Чăваш Республикин патшалăх символĕсен историйĕпе кăсăклантарĕ; вĕсенче патриотлăх туйăмне йĕркелеме, тăван халăхпа çыхăннине ăнланма, çамрăк ăрăвăн пултарулăхне аталантарма, республикăри культурăпа вĕренӳ учрежденийĕсен пĕрлехи ĕçне вăйлатма пулăшĕ.

Конкурса 7 çулти ачасенчен пуçласа 30 çулти çамрăксем таранах, библиотекарьсемпе педагогсем хутшăнма пултарассĕ.

**Номинацисем:**

– литература пултарулăхĕ;
– тĕпчев ĕçĕсем;
– библиотека мероприятийĕсен сценарийĕ;
– класс тулашĕнчи мероприятисен хатĕрлевĕ;
– мастер-классен хатĕрлевĕ.

Ĕçсене чăвашла е вырăсла çырма юрать.

Конкурс положенийĕпе тата заявкăсен формипе библиотекăн сайтĕнче, «Конкурссем» рубрикăра паллашма пултаратăр.

Ĕçсене кăрлач уйăхĕн 25-мĕшĕнчен пуçласа ака уйăхĕн 20-мĕшĕччен çак адреспа йышăнаççĕ тата регистрацилеççĕ: 428027, г. Чебоксары, пр. И.Яковлева, д. 8а, отдел краеведческой и национальной литературы; «Герб, ялав, гимн – пирĕн пуянлăх» республика пултарулăх конкурсне тесе палăртмалла. Электрон почтăпа ăсатма та юрать: **kray1@chuvrdub.ru.**

Конкурс пĕтĕмлетĕвне библиотекăн тĕп сайтĕнче **/ chuvrdub.ru/** вырнаçтарăпăр. Çĕнтерӳçĕсене дипломсене электрон майпа ярса парăпăр. Чи лайăх ĕçсем республика кăларăмĕсенче пичетленĕç. Конкурса хутшăнакансем пурте çакна ĕнентерекен Сертификата, ертӳçисем вара Тав çырăвĕсене электрон майпа тивĕçĕç.

**Телефонсем: 8/8352/52-37-22, 54-02-82, 8-961-345-21-55 /Татьяна Федоровна Захарова/.**

# Шĕшкĕпе хурама туслăхĕ

## Юмах

Вăрманти уçланкăра икĕ тус: шĕшкĕпе хурама саркаланса ӳснĕ. Пĕр-пĕринпе каласса кун-кунланă вĕсем.

Пĕр хĕллехи илемлĕ кун вĕсем патне арçынсен пырса тăнă. Сăмах-юмах çапнă хыççăн икĕ йывăça касса çуна çине хунă та килелле васканă.

– Пичче, сывă пул! Урăх эпир нихăçан та тĕл пулаймăпăр! Эх, иккĕн мĕн тери хаваслă та кăмăллă пурăнаттăмăр, – тенĕ шĕшкĕ чунтан кулянса.

– Çапла-а-а... Лайăхчĕ пĕрле... Сывă пул эппин! Мана нихăçан та ан ман, – терĕ хурама та хурлăхлăн.

Вăхăт иртсен хайхи арçынсем ĕçе те тытăнчĕç. Çунасемпе йĕлтĕрсем тата йĕлтĕр патаккисем ăсталарĕç.

...Акă ачасем сăрта ярăнма килчĕç.

– Салам, тусăм! – кăшкăрчĕ йĕлтĕр хăй тусне, мăйăртан ăсталанă йĕлтĕр патакне курсан.

– Ĕнтĕ эпир малашне çак вырăнта тĕл пулăпăр, чунсене пусарăпăр каласса. Унчченхиллех туслăх çирĕп пултăрччĕ ĕнтĕ.

Хурамапа мăйăр йывăçĕсем хăйсен шăпипе çырлахнине пĕр-пĕрне пĕлтерсе йăл кулса ячĕç.

***Кирилл ГРУШАНИН.***

Шупашкар,
6-мĕш шкул.

Çырăнтару – 2017

2017 çулăн II çурринче илсе тăмашкăн
"Хыпар" Издательство çурчĕн кăларăмĕсене
***пушăн 31-мĕшĕччен***
çак хаксемпе çырăнтараççĕ:
**«ХЫПАР»** (индексĕ П2273)– 624 тенкĕ,
**«ХЫПАР-эрнекун»** (индексĕ П2267)– 286 тенкĕ те 92 пус,
**«ТАНТĂШ»** (индексĕ П2275) – 217 тенкĕ те 14 пус,
**«ТЕТТЕ»** (индексĕ П2303) – 135 тенкĕ те 42 пус,
**«САМАНТ»** (индексĕ П2302) – 171 тенкĕ те 84 пус

Тантăш чăваш ачисен хаçачĕ

● **УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ**
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви; Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство çурчĕ» Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ.

● **ХАÇАТ ИНДЕКСĔ:**
**54802** – (çур çула) – Чăваш Республикинче

● **Редакципе издатель адресĕ:**
428019, Чăваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

● "Хыпар" Издательство çурчĕ" АУ техника центрĕнче калăпланă. "Чувашия" ИПК" АО типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Чăваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

● **"ЧУВАШИЯ" ИПК" ДИРЕКТОРĔ:**
Тел.: 64-24-01

● **ДИРЕКТОР - ТĔП РЕДАКТОР**
**тивĕçĕсене пурнăçлакан**
**Д.А.МОИСЕЕВ**

● **ТЕЛЕФОНСЕМ**

| | |
|---|---|
| директор-тĕп редактор: | 56-00-67 |
| редактор, çырусемпе тата юнкорсемпе ĕçлекен пай: | 28-83-86 |
| шкул ачисен пайĕ: | 28-85-69 |
| спорт тата экологи пайĕ: | 56-11-80 |
| право, кăмăл-сипет пайĕ: | 28-83-89 |
| факс: | (8352) 28-83-70 |
| бухгалтери: | 28-83-64 |

● **РЕДАКТОР**
**В.ФЕДОРОВ**

● **НОМЕР ВУЛАВÇИ**
**Л.ПЕТРОВА**

● **КАЛĂПЛАВÇĂ**
**Н.ПЕТРОВА**

● **ЭЛЕКТРОН АДРЕС:**
e-mail: tantas@list.ru

● **ТИРАЖ**
**1243 экз.**

● **ЗАКАЗ**
**№ 314**
Пичете нарăс уйăхĕн 1-мĕшĕнче алă пуснă.

● **ПИРĔН САЙТ:**
www.hypar.ru

Газета «Тантăш» («Ровесник») зарегистрирована Управлением Федеральной службы по надзору в сфере связи, информационных технологий и массовых коммуникаций (Роскомнадзор) – свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ТУ21-00306 от 10.12.13 г.

Ⓟ паллăпа реклама материалĕсене палăртнă

Пичете графикпа 15 сехетре алă пусмалла, 14 сехет те 00 минутра алă пуснă.

# Хĕрӳ хастарлăхпа, пысăк яваплăхпа

Пирĕн шкулта çулленех иртекен «Пĕлӳре – вăй» ăслăлăхпа практика конференцине хутшăнма çамрăк тĕпчевçĕсем вĕренӳ çулĕ пуçлансанах хастарлăха, яваплăха туйса хатĕрленме тытăнаççĕ.

Ĕçе сая ямаççĕ. Тăрăшăва ыттисене кăтартас тĕллевпе хальхинче те çиччĕмĕш конференци йĕркелерĕç. Унта пурĕ пилĕк секци ĕçлерĕ

Ачасем ытларах технологи, математика, тăван ен, ют чĕлхесен предмечĕсене кăмăлланине палăртрĕ шкулти наука обществин ертӳçи Мария Анатольевна Семенова. Вĕренекенсемпе учительсем нумай тăрăшаççĕ. Çамрăксене интереслентерес тесен тĕрлĕ май шырама тивет. Çавăнпа та педагогсем тĕрлĕ май шыраса вĕсен яваплăхне, хастарлăхне аталантарма ӳркенмеççĕ.

Тĕпчевçĕсен ĕçĕсене шкул учителĕсем кăна мар, аслă вĕренӳ заведенийĕсен преподавателĕсем, студентсем, хулан Калинин районĕнчи ача-пăча центрĕн методисчĕсем хутшăнчĕç. Хумхану, пăлхану туйăмĕсем кашни çыншăн яваплă самантра ют мар. Апла пулин те конференцие хутшăннă ачасем хăйсене тивĕçлипех çӳллĕ шайра кăтартма тăрăшрĕç. Çĕнтерӳçĕсен йышне Софья Павлова /8-мĕш «ф»/, Александра Иванова /9-мĕш «а»/ – ертӳçи – технологи учителĕ Л.А.Павлова; Даша Григорьевăпа Лиза Петрова /8 «м»/ – ертӳçи – математика вĕрентекен М.П.Гузь; Мария Иванова /10-мĕш «а»/ – ертӳçи – обществознани учителĕ М.В.Федорова; Настя Ярадаева /9-мĕш «б»/ ертӳçи – С.В.Карабут, В.Н.Петрова филологсем – кĕме пултарчĕç. «Тăван ен, Тăван çĕршыв» секцире те Софья Павлова пĕрремĕш вырăна тухрĕ. Харăсах «икĕ мулкача та тытма пултаракана» ăслăлăх ертӳçи, чăваш чĕлхи вĕрентекенĕ М.А.Семенова çеç мар, юлташĕсем те саламларĕç. Тăван ен мухтавлă çыннисем пирки сумлă ĕç çыракан Илья Семонов /6-мĕш «м» класс/ çĕнтерӳçĕсен ятне илни унăн педагогне О.И.Герасимовăна савăнтарчĕ.

Çĕнтерӳçĕсен хастарлăхĕ ыттисемшĕн ырă тĕслĕх вырăнне пулчĕ.

*Елена ЯНДРОВА,*
*чăваш чĕлхи вĕрентекен.*

Шупашкар,
41-мĕш шкул.

# Туслă çемьере çитĕнетĕп

Çемье чи çывăх çынсене çыхăнтарать. Çакна эпĕ хамăр çемье пирки те татăклăнах калама пултаратăп. Эпир пурĕ пиллĕкĕн пурăнатпăр: атте, анне, пичче, аппа тата эпĕ.

Анне Куславккара бухгалтерта ĕçлет. Атте вара чугун çул çинче дефектоскопистра тăрăшать. Кашни çыннăнах юратнă профессийĕ пур. Хăйсен ĕçĕсене кăмăлтан туса пыраççĕ. Иккĕшĕ те питĕ кăмăллă çынсем. Саша пичче Шупашкарта çар çынни пулса ĕçлет, кунтах пурăнать. Унăн хăйĕн çемйи. Русланпа Ксюша ачисемпе пирĕн пата хăнана килсен эпĕ вĕсемпе тĕрлĕ вăйă вылятăп, питĕ юрататăп маттурсене.



Диана аппа музыка училищинче пĕлĕвне малалла аслăлатать. Киле таврăнсан вара хăйĕн пулас профессийĕ пирки темĕн те интересли каласа тĕлĕнтерет.

Хам вара пиллĕкмĕш класра тăрăшса вĕренетĕп. Аттепе аннене тарăн пĕлӳпе савăнтарас тесе питĕ тăрăшатăп.

*Катя ТОКАРЕНКО.*

Куславкка районĕ,
Тĕрлемес шкулĕ.

**СĂНӲКЕРЧĔКРЕ:** тăрăшса вĕренетĕп эпĕ.

# Пушă пулмĕ «столовăй»

Хĕлĕн юлашки уйăхĕ те сивĕпех хуçаланма тытăнчĕ. Кун пек чухне никама та çăмăл мар. Уйрăмах кайăксене йывăр. Вĕсем выçăпа аптăраççĕ. Кил-çурт таврашĕнче хӳтлĕх шыраççĕ. Çакна шкул ачисем пĕрре çеç мар асăрханă.

Пирĕн шкул ачисем хĕл кунĕсенче çунатлă туссене валли сырăшсем тăвас ĕçе аван йĕркелерĕç. Кашниех темиçешер «столовăй» турĕ. Тутлă апатпа сăйланма вара кăсăясемпе çерçисем кăна мар, тепĕр чухне ула кураксем те, чакаксем те «хăнана» кĕрсе тухаççĕ. Вĕсене те пĕрре те çăмăл мар-çке. Халĕ Никита Кузьмин хăй ăсталанă вĕллесене кăмăлтан сăнать. Унта яланах кайăксем апатланаççĕ. Андрей Дмитриевпа Дима Матвеевăн «столовăйĕ» те яланах уçă.

Маттур пиллĕкмĕшсем! Ытти классенче вĕренекенсем те хăйсен юлташĕсенчен ырă тĕслĕх илсе сырăшсем çакма палăртрĕç.

*Екатерина ПЕТРОВА.*

Шупашкар районĕ, Ишек шкулĕ.

**СĂНӲКЕРЧĔКРЕ:** «Пирĕн сырăшсем çунатлă туссемшĕн чăн-чăн хӳтлĕх вырăнĕнчех пулĕç!» – теççĕ çут çанталăкăн çамрăк тусĕсем.






# Тăххăрмĕшсем сăмахпа каласа экзамен тытĕç

**Кăçал тăххăрмĕш класран вĕренсе тухакансен сăмахпа каласа экзамен тытма тивет. Çакăн çинчен çĕршыв вĕренӳ министрĕ Ольга Юрьевна Васильева пĕр телеканалти интервьюра палăртса хăварнă.**

«Хальлĕхе ку сăнав мелĕ темиçе тăрăхра пулĕ. Тепĕр виçĕ çултан – çĕршывĕпех», – тенĕ министр.



Ольга Юрьевна Васильева палăртнă тăрăх «Пирĕн калаçма, хамăр шухăша сăмах вĕççĕн уçса пама пĕлмелле. Тăван чĕлхепе илемлĕ калаçма пирĕнтен кашни тивĕç».

Кăçалхи аттестацире ют чĕлхепе кăна тест пайĕ юлать. Ачасене экзаменсем пама вĕренткелемелле кăна мар, вĕренме вĕрентмеллине те палăртнă вăл хăйĕн сăмахĕнче.

Патшалăхăн пĕрлĕхлĕ экзаменсен йышне географи предметне кĕртес шухăша вăл чӳк уйăхĕнчех ырланăччĕ. Унччен вара аслă вĕренӳ заведенийĕсене кĕрес текен абитуриентсен çыру ĕçĕпе те экзамен тытмаллах тенĕ.

Тăххăрмĕшсен вырăс чĕлхипе тата математикăпа тытма тивет. Унсăр пуçне вĕренекен хăй суйланă тата тепĕр икĕ предметпа.

**СĂНӲКЕРЧĔКРЕ:** ачасем – экзаменра.

# Ачасем кăна мар…

**Патшалăхăн пĕрлĕхлĕ экзаменĕсенчен шкул ачисем кăна шикленеççĕ тетĕр-и? Çук пуль. Хальхинче вĕсен ашшĕ-амăшĕ те экзамен сĕтелĕ хушшине ларĕ. Аслисем «Ашшĕ-амăшĕн ППЭ тытмалли пĕрлĕхлĕ кун» çĕршыв акцине хутшăнĕç.**

Вăл нарăс уйăхĕн 7-мĕшĕнче 11 сехетре Олимп резервĕсен Шупашкарти училищинче иртĕ. Нарăс уйăхĕн улттăмĕшĕччен ачасен ашшĕ-амăшĕн 57-21-60 телефонпа хăйсен пырас кăмăлне пĕлтермелле, регистрациленмелле.

Çак кун аслисем вырăс чĕлхипе экзамен тытĕç. Ачасем пекех вĕсен те çирĕп тĕрĕслев витĕр тухма тивет: нимĕнле шпаргалкăпа та усă курма юрамасть, карас телефонсене кĕнĕ çĕрте хăварма тивет. Экзамен материалĕсене хăйсен умĕнче аудиторире уçĕç, хуравĕсене сканер витĕр кăларса тĕрĕслемелли тĕп пункта ăсатĕç. Экзамена хутшăннисем хăйсен пĕлĕвне мĕнле хакланине çав кунах пĕлме пултарĕç. Вĕсен хушамачĕсем çеç паллă мар, вĕсен вырăнне кашнин хăйĕн вăрттăн шифр пулĕ.

Мĕнех, ачасен ашшĕ-амăшне те патшалăхăн пĕрлĕхлĕ экзаменĕнче ăнăçу çеç сунар.

# Çамрăк çул-йĕр инспекторĕсем тупăшрĕç

**Çул-йĕр çинче кашнин асăрхануллă пулмалла, унта хамăра тытма пĕлмелле.**



Çак кунсенче Сĕнтĕрвăрри хулинче республикăри çул-йĕр çамрăк инспекторĕсем пухăнчĕç. «Ачасем – çул-йĕр çинчи хăрушсăрлăхшăн» фестивале хутшăнакансен калаçмалли, пĕрле сӳтсе явмалли темĕн чухлех пулчĕ. Вĕсем тĕрлĕ проектăн ăнăçлăхĕсене палăртрĕç, çитменлĕхĕсем пирки пĕрле канашларĕç кăна мар, пĕр-пĕрин опычĕпе те паллашрĕç.

Мала тухнă отрядсене хаклă парнесемпе, Хисеп грамотисемпе хавхалантарчĕç.

Икçĕре яхăн çамрăк инспектор хутшăннă хаваслă слет пуриншĕн те усăллă иртрĕ. Ачасем çул-йĕр правилисене мĕн пĕчĕкрен тимленин усси пулмаллах. Çул çинче инкексен шучĕ чакнинчен ырри нимĕн те çук.

**СĂНӲКЕРЧĔКРЕ:** слета пухăннисен пĕр ушкăнĕ.

➲➲➲ Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр.

# Ял пурнăçне кăмăллакан Типшĕм Андрей





## Çар çынни пулăп эп!

Шупашкарти 151-мĕш садике çÿрекен улттăри Андрей теттисемпе вылянă вăхăтра яланах юрлать. Ара, пысăк сцена çине те пĕрре мар тухнăскер шăпăрт лараймĕ. Çакна кура паллакансем, тус-пĕлĕшĕ ашшĕнчен, Типшĕм Сашукран:

– Ывăлна та хăвăн пекех юрăçă тăвасшăн пуль-ха? – тесе кăсăкланать.

– Çу-у-ук, килте пĕр юрăçă пур. Çитет. Январĕн 12-мĕшĕнче, прокурор кунĕнче çуралнăскере прокурорах тăвасшăн, – хуравлать вăл çапла самантрах.

Андрей сцена çине пĕрремĕш хут утма пуçласан, сакăр уйăхра, ашшĕн концертĕнче хĕреснеашшĕпе Андрей Шадриковпа тухнă. Ун хыççăн каллех халăх умне васканă пĕчĕкскер. Юратнă çыннипе юрă шăрантарнă...

Арçын ача вунă уйăх тултарсан тухтăрта вăй хуракан амăшĕ, Татьяна Владимировна, ĕçе тухнă. Çакна пула Андрей ытларах ашшĕпе вăхăт ирттернĕ. Асли концерта хатĕрленнĕ май, кĕçĕннине пĕрле студие, репетицие илсе çÿренĕ. Андрейшăн çак кунсем хăйне евĕр кăсăклă иртнĕ... Çавăн пекех Типшĕмсем пĕр пек тăхăннă, парикмахерскинче те пĕр пек прическа кастарнă. Пĕтĕм чун хавалĕпе гитара калană.

Ĕнтĕ паян пĕчĕк Типшĕме урамра та, лавккара та – кирек ăçта та палласа илеççĕ.

– Типшĕм Андрей вĕт ку! Пулас юрăçă! – хавхаланаççĕ хĕпартлансах.

Ÿссен Андрей ашшĕ çулĕпе кайĕ е урăх професси суйлĕ? Ку ыйтăва вăл татăклăн хуравлаймасть-ха хальлĕхе. Официант, оператор, рокер пулас ĕмĕт канăç памастчĕ-ха ăна ку таранччен. Ĕнер телевизорпа çар çыннисем пирки мультфильм курчĕ те:

– Атте! Эпĕ урăх никам та мар, пограничник пулатăп! – савăнăçлăн сиккелерĕ вăл çав самантра. – Кур-ха, кур! Çар тумĕ тăхăннă, çÿллĕ пÿллĕ çамрăк. Ух! Мĕнлерех вăл! Чĕн пиçиххипе пилĕкне туртса çыхнă. Пуçĕнчи карттусне симĕс тĕспе тыттарнă. Пограничник, акă кам пулатăп эпĕ те, атте!

Пĕтĕм чун хавалĕпе пÿлĕм тавралла тĕпĕртетрĕ те вылямалли машинисене çÿлĕк çинчен илчĕ.

– Çар çыннин техникăна лайăх пĕлмелле. Çавăн пекех тирпейлĕх пирки те манас çук. Унсăр пуçне техника тасалăха кăмăллать, – тесе пультпа машинине урай варрине чуптарма тытăнчĕ.

Чăнах, пысăк çын пек калаçать вăл. Темиçе çул каялла илсе панă теттисем паянхи кун та вĕр çĕнĕ авă. Выляна хыççăн урай варрине вĕсене сапаласа хăвармасть, арăш-пирĕш тыткаласа çĕмĕрмест. Кашни теттин хăй вырăнĕ пур. Тепĕр чухне тусĕсене те хăйĕнчен тĕслĕх илме сĕнет.



## Атте, хăçан яла каятпăр?

Ял тесен-и? Пуçăннă ĕçне пăрахса, пĕчĕк кутамккине хăпăл-хапăл çурăм хыçне çакса хваттертен тухса кайма хатĕр. Анчах хальлĕхе ăна пĕччен çула тухма никам та ирĕк памасть. Çавăнпа вăл кукашшĕпе кукамăшĕ Владимир Михайловичпа Валентина Александровна Порфирьевсем патне час-час шăнкăравлать. Ял пурнăçĕпе кăсăкланать. Лешсем те мăнукĕшĕн тунсăхланăскерсем:

– Хăçан яла килетĕн? Вылльăхусем те сана курасшăн, – тесе ăшшăн калаçаççĕ.

Ах, çуначĕсем пулсан-и? Паянах Курнавăша вĕçнĕ пулĕччĕ Андрей! Чи малтанах пÿрте те мар, сарайне чупса кĕрĕччĕ. Чĕлхесĕрскерсене пурне те ыталаса ачашлĕччĕ. Тус-юлташĕсемпе кĕреçе тытса окоп чавĕччĕ, йывăç çинчи сырăшсем çине кайăксем валли апат хурĕччĕ, тăвайккине çуна сĕтĕрсе чупĕччĕ...

Çакнашкал калаçу хыççăн ашшĕ-амăшĕ çумне сухăр пек çыпçăнать арçын ача.

– Атте, анне хăçан яла каятпăр?

– Эрне варринче май çук, ĕçлетпĕр. Эрне кунччен е шăмат кунччен чăт-ха, вара çула тухăпăр, – илтет вăл çакнашкал хурав.

– Эх, хăçан çулла çитет-ши? Çăвĕпех ялта пурăнатăп! Унта савăнмалли тем чухлех. Сурăхсене сыхланă вăхăтра пĕр кайăк сассине итлесе тăнă хушăра тепри юрласа ярать. Маттур шăпчăк та вăрмана янратать. Симĕс çулçă витĕр хĕвел çути ÿкни, лĕпĕшсем вĕçни – пурте савăнтарать, – хăпартланать пĕчĕксер.

Паян та ялшăн, картишĕнчи выльăхчĕрлĕхшĕн тунсăхлать Андрей. Куçĕ умне ачаш ĕни, çăкăр чĕлли çиме юратакан сурăхĕсем шуса тухаççĕ те пĕчĕк тути йăл кулать.

– Кукамай вĕсене çăнăх пама манмасть-ши? Кукаçи тата техĕмлĕ утăпах савăнтарать-ши? Шывне вăхăтра параççĕ-ши? Е тата епле сивĕсем пулчĕç те каçсерен витене хупрĕç-ши? – калаçать вăл хăйпе тепĕр чух.

Тунсăха сирес тесе алла кăранташпа шурă хут илсе ÿкерме тытăнать. Шухăшĕпе каллех ялта. Акă, ĕне ÿкерет. Умĕнче – ула-чăла пăрушĕ. Çурăмĕ çинче хăйма тăкнă тейĕн – унта та кунта шурă лаптăксем курăнаççĕ... Авă, инçех мар хур-кăвакал, чăххи-чĕппи...

– Ывăлăм, аслаçу та выльăх тухтăрĕ пулнă, эсĕ вара йăлтах ăна хывнă. Картишри кашни чуншăн пăшăрханатăн, вĕсене хĕрхенетĕн. Кукамупа кукаçу ялĕнче те ферма заведующийĕ пекех эсĕ. Кусна усна-усманах картише чупса тухатăн. Атя, пуçри шухăшсене аталантармалла алла гитара тытар-ха, – тет ашшĕ ывăлĕпе ăшшăн калаçса.

...Тĕлĕкре те Андрей Курнавăшра. Ир-ирех сысна витине çурасене курма чупса кĕчĕ.

– Çуллахи кун пулсан, валашкара чăпăл тăвăттăм сире. Супăньпе çăвăттăм, çемçе мунчалапа сăтăрăттăм. Çыпçăнăр лайăхрах, çыпçăнăр аннĕр çумне, – вĕçĕмсĕр калаçрĕ вăл çурасемпе. – Чим, эсĕ чи пĕчĕкки мĕн çухăратăн? Ак тепре тытса чăмăртамха сана. Хытă кăшкăрнăшăн ачашшăн хăлхуна лăскам. Ну, ăçта кайса тăтăн? Кĕтесе кайса хĕсĕнтĕн-и? Кил, кил кунталла. Чим, аннÿ мĕн стена еннелле çаврăнса выртнă? Тăр-ха, тăр, ак кунта вырт. Хуллентерех, хуллентерех çĕклен, çурусене хăратса пăрахăн. Ну, вырт халĕ.

Йăл кулса вăранчĕ Андрей, анчах хăй хулара пулнине аса илчĕ те чунĕ пусăрăнчĕ. Юнашар выртакан ашшĕне кăлт! тĕксе:

– Атте, хăçан яла каятпăр? – терĕ.

...Кукашшĕпе кукамăшĕн, аслашшĕпе асламăшĕн чĕлхине аван пĕлекен Андрей пысăк ĕмĕтпе пурăнать. Ашшĕпе амăшĕ ăна пĕр-пĕр кун пĕчĕк шăллĕне парнелессе кĕтет.

– Юлташсен шăллĕ е йăмăк пур. Манăн вара вăл та, ку та çук. Эсир ăна парнелесен, эпĕ ăна юрласа çывăрттарса янă пулăттăм. Сăпка юррисене те вĕренĕттĕм ун чухне. Кăшт пысăклансан атте, эпĕ тата ВĂЛ халăх умне тухăттăмăр, – хăпартланать Андрей çунатлă ĕмĕт авăрĕнче вĕçнĕ май.

Апрель уйăхĕн 4-мĕшĕнче вара Типшĕм Андрей çĕнĕ юрăпа сцена çине тухма ĕмĕтленет. Унччен вăхăт пур-ха, анчах шутлă кунсем хăвăрт, сисĕнмесĕр иртессе пĕлет вăл. Çавăнпа пысăк уява хатĕрленме тытăннă та.

– Унччен кукамайпа кукаçи патне çитсе килмелле, сцена çине тухма ялтан вăй-хăват илсе килмелле, – тет вăл юратнă çыннисене.

*Луиза ВАСИЛЬЕВА.*

**СĂНÿКЕРЧĔКСЕНЧЕ:** Егоровсен çемйи; сцена çинче пĕчĕк Андрей; кĕтÿре мороженăй тата тутлăрах.

# Янăратăр ача-пăча сасси шкулта та килте!



Элĕк районĕнчи Элĕкри вăтам шкулта кĕçĕн классене вĕрентекен Оксана Борисовна Петрова хăйĕн профессийĕпе питĕ кăмăллă.

– Ачасене юратнăранах ĕнтĕ шкул сукмакне нумай çул такăрлататăп. Кăçал авă 1-мĕш «в» класс ертÿçи эпĕ. Иртрĕ сентябрĕн 1-мĕшĕ, иккĕмĕшĕ, виççĕмĕшĕ... Класс пурнăçĕ такăр çулпа чупнине сиссе те юлаймарăм темелле. Хĕрачасемпе арçын ачасем çак вăхăтра чылай çĕннине пĕлчĕç, шкул пурнăçне хăнăхрĕç. «Тетте» журналпа та çав тери туслашрĕç. Пирĕншĕн вăл чи юратнă кăларăм пулса тăчĕ. Хăйсен ĕçĕсене журналта курни вĕсемшĕн калама çук пысăк телей. Вĕсен савăнăçĕ мана та хăпартлантарать. Пичĕсем йăл кулăпа тулни, куçĕсем çăлтăр евĕр çиçни пурнăçра та ÿсĕмсем тума пулăшать. Манăн класра 23 ача. Пурте хăйне евĕр пултаруллă. Хитре ÿкерекен те, спорта чунтан кăмăллакан та, сăвă-калав вулама юратакан та, аслисене пулăшма ăнтăлакан та, кайăксемшĕн тус пулакан та пур пирĕн хушăмăрта. Малашне те кашни куна усăллă, ăнăçлă, тухăçлă ирттерме ĕмĕтленетпĕр, – çирĕплетет Оксана Борисовна хавхаланullăн.

Хастар педагогăн ашшĕпе амăшĕ Элĕк тăрăхĕнчен. Çамрăк чухне Тюмене куçса кайнă вĕсем пĕр канашлă пулса. Оксана Борисовна вара шăп çав тăрăхра кун çути курнă.

– Тюменьти самантсене пачах та астумастăп тесен те йăнăш пулмĕ. Эпĕ пĕчĕк чухнех юратнă çынnăмсем тăван тăрăха каялла килсе тĕпленнĕ. Маншăн та кунти тавралăхран хакли çук. Унăн илемне çут çанталăк капăрлатать. Кайăк-кĕшĕк, йывăççем, юханшыв, пĕве, йăл кулса пăхакан хĕвел... Е тата ача-пăчасăр тĕнче илемлĕ пулĕччĕ-и? Çук, паллах! Апла-тăк яланах янăратăр ача-пăча сасси шкулта, килте, садикре! Вĕсем пире пурнăçра хавхалантараççĕ, ÿсĕмсем тума пулăшаççĕ, – тет Светлана Борисовна.

Вĕренекенсем педагога хисеплеççĕ, юратаççĕ. Унăн кашни сăмахне ăша хываççĕ.

– Ÿссен эпĕ те вĕрентекен пулатăп! – тет пĕри хавхаланса.

– Мана та килĕшет учитель профессийĕ, эпĕ те Оксана Борисовна çулнех суйлăп, – çирĕплетет тепри те.

*Луиза ВАСИЛЬЕВА.*

## ĂШĂ САЛАМСЕМ

СМС саламсене пĕлтермелли номер: 89051975911

Шупашкарта пурăнакан, пур енчен те пултаруллă, ăшă кăмăллă, ытарайми **Зинаида Григорьевна СЮТРУКОВА** нарăсăн 4-мĕшĕнче хăйĕн 80 çулхи сумлă юбилейне паллă тăвать. Пурăнас кун-çулу вăрăм килтĕр, сывлăху иксĕлми çирĕп пултăр, ĕмĕтсем пурнăçа кĕрсе пыччăр, сывăх çыннăрсем те сирĕн пекех пултаруллă пулччăр.

*Нина МИХАЙЛОВА, Валентина ГРИГОРЬЕВА, Римма МИХАЙЛОВА, Хиония МАКСИМОВА.*
Элĕк районĕ.

«Тăван Атăл» журнал редакцийĕнче вăй хуракан тÿрĕ чунлă, ăшă кăмăллă **Елена Михайловна АТАМАНОВА** çитес кунсенче черетлĕ çуралнă кунне паллă тăвать. Ăна чĕререн саламлатпăр, пур ĕçре те ăнăçу, командировкăсене çÿренĕ чухне такăр çул, çемьере килĕшÿпе тату, яланах çирĕп сывлăхпа вăй-хăват сунатпăр.

*Сирĕн хайлавсене вуласа савăнакансем.*

Элĕк районĕнчи Качалав ялĕнче пурăнакан, пилĕк ачана çуратса мăшăрĕпе пурнăç çулĕ çине кăларнă **Мария Павловна ФЕДОТОВА** нарăсăн 7-мĕшĕнче 79 çул тултарать. Тата унăн кĕçĕн хĕрĕ, Элĕк больницинче вăй хуракан **Светлана Тельмановна НИКИФОРОВА**, черетлĕ çуралнă кунне паллă тăвать. Иккĕшне те чĕререн саламлатпăр. Çирĕп сывлăхпа вăй-хăват, ăнăçупа телей сунатпăр.

*Ял-йыш, ачисем.*

Канаш районĕнчи Ешкилт ялĕнче пурăнакан, Шуркасси шкулĕнче математика вĕрентекен пултаруллă **Антонина Яковлевна ИГНАТЬЕВА** черетлĕ çуралнă кунне паллă тăвать. Эпир ăна иксĕлми телей, çирĕп сывлăхпа кунсерен ăнăçу, ĕçре те, пур çĕрте те такăр çулпа ыткăнма вăрăм ĕмĕр сунатпăр.

*Пĕрле вĕреннĕ Надя ИЛЛАРИОНОВА тата Нина МИХАЙЛОВА.*

Чăваш наци радиовĕнче ĕçлекен, кунсерен çынсене хăйĕн çепĕç сассипе тата юррисемпе савăнтаракан **Ирина Алексеевна ЛАМПАСОВА** нарăсăн 7-мĕшĕнче хăйĕн 25 çулхи юбилейне паллă тăвать. Эпир ăна чĕререн çирĕп сывлăх, ăнăçу, телей сунатпăр. Малашне те пире çавăн пек савăнтармалла пултăр.

*Радиоитлекенсем.*

# Вулакансем корреспондентсемпе тĕл пулчĕç



**Нумаях пулмасть республикăри ачасемпе çамрăксен библиотекин таврапĕлÿпе наци литературин уйрăмĕнче «Самант» журнал корреспонденчĕпе Нина Царыгинăпа тата «Тантăш» хаçат корреспонденчĕпе Лариса Петровăпа тĕлпулу иртрĕ. Унта Шупашкарти экономикăпа технологи колледжĕн студенчĕсем хутшăнчĕç.**

Библиотекарь тĕлпулăва пуçтарăннисене çамрăксен «Самант» журналĕ нарăс уйăхĕнче 88 çул тултарассине пĕлтерчĕ. Унăн пĕрремĕш номерĕ 1929 çулхи нарăс уйăхĕнче 3 пин экземпляр тиражпа «Хатĕр пул» ятпа тухнă. Пĕрремĕш редакторĕ Иван Яковлев пулнă. Журнал кăларас ĕçе Уйăп Мишши, Нестер Янкас, Марфа Трубина, Петр Митта, Иван Малкай, Леонид Агаков, Митта Ваçлейĕ, Василий Алагер, Степан Лашман çыравçăсем хастар хутшăннă. Журналăн кашни номерĕнче чăваш композиторĕсемпе художникĕсен ĕçĕсем пичетленнĕ. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи пуçлансан, 1941 çулхи çĕртме уйăхĕнче, журнал кăларас ĕç чарăннă. 1977 çулхи пуш уйăхĕнче çеç «Хатĕр пул» тепĕр хут тухма тытăннă. 1991 çулхи кăрлач уйăхĕнчен пуçласа 2003 çулхи авăн уйăхĕччен журнал «Çилçунат» ятпа тухнă. Тĕрлĕрен çулта журнал редакторĕ пулса ĕçленисем: Порфирий Афанасьев, Александр Мефодьев, Анатолий Смолин тата Людмила Смолина. Журналта çамрăк талантсен сăввисем, калавĕсем, ÿкерчĕкĕсем пичетленнĕ, çав авторсенчен чылайăшĕ кайран паллă поэт, писатель, художник пулса тăнă. Çавăн пекех викторинăсем те пичетленнĕ, конкурссемпе диспутсем те иртнĕ. 2003 çулхи юпа уйăхĕнчен пуçласа журнал «Самант» ятпа тухса тăрать. Паянхи «Самант» – чăвашла хыпарлакан, Чăваш Ен çамрăкĕсен пурнăçне çутатакан тĕрлĕ тĕслĕ журнал.

Нина Царыгина корреспондент журнал çинчен тĕплĕнрех каласа пачĕ: рубрикăсем, конкурссем, парнесем, «Самант» хăнисем… Журналист ĕçĕн хăш-пĕр вăрттăнлăхне те уçса пачĕ вăл, çамрăксен сĕнĕвĕсене те шута илчĕ.

«Самант» журналти рубрикăсенчен пĕрне «Тантăш» хаçат корреспонденчĕ Лариса Петрова тытса пырать. Вăл çамрăксене хаçат-журналти хыпарсемпе паллашма кăна мар, хăвăн та çырса хатĕрлеме май пурри çинчен каларĕ.

Корреспондентсем тĕлпулăва пуçтарăннисен ыйтăвĕсене тулли кăмăлпа хуравларĕç, вĕсене лайăх вĕренме тата пултарулăхра çитĕнÿ тума ăнăçу сунчĕç.

*Татьяна ЗАХАРОВА.*

**ВĂРÇĂ АХРĂМĔ**

# Анне, аннеçĕм, сана малашне те юратăп...

**СССР халăх художникĕ Илья Сергеевич Глазунов Ленинград блокадине епле чăтса ирттернине каласа панинчен.**



© *Пĕчĕк Илья амăшĕпе*

## Сывлама та вăй кирлĕ

«Урамра 40 градус сивĕ. Ир те, каç та, кăнтăрла та пĕр тумпах. Кантăксене касхине утиялсемпе карса хуратпăр. Ара, сивĕ ан кĕтĕр тетпĕр çав. Ирхине вара ăна сирме, ай, мĕн тери тăрмашмалла! Вăй çук та ăста унта çӳлелле кармашма? Çавăнпа тепĕр чухне тĕттĕмрех кун-кунлатпăр.

Урамра утма май çук. Ĕнтĕ хăçантанпа юр хырман. Тӳнсе кайсан та тăраяс çук. Е тата утнă çĕртех ӳксе вилекен мĕн чухлĕ! Вĕсен шучĕ те çук паллах. Хайхисене юр хӳсе каять те никама та кирлĕ мар пулса юлаççĕ.

1942 çул. Çĕнĕ çул уявĕ. Тем пек йывăр пурнăç пулсан та анне ăна кăшт савăнăçлă ирттерес терĕ. Пӳлĕм варрине вырнаçтарнă чăрăш вуллисем çине шурă материалпа чĕркенĕ сĕт кĕленчисене çакрĕ. Юнашар пурăнакансем те çак илеме курма килчĕç.

– Ах, вăрçăччен сĕте тăраниччен ĕçеттĕмĕр, халĕ кĕленчисем çине çеç пăхса лармалла ĕнтĕ, – терĕç пăшăлтатса.

Анне таçтан çурта тупрĕ. Ăна темиçе пай туса сĕтел çине черетпе лартрĕ те вĕсене шăрпăкпа тивертрĕ. Йăлкăшса çунаççĕ çуртасем. Çавăнталла тинкереççĕ килнисем. Çунсан, çунсан лапах сӳнчĕç çуртасем... Кӳршĕсем макăрсах ячĕç.

– Пирĕн пурнăçа сăнларĕç вĕсем. Вăрçăччен аван пурăнаттăмăр. Такăр çулпа утса-чупса çӳреттĕмĕр. Инкек сиксе тухрĕ те сукмак тумхахланчĕ. Такăнтарать те, шутарать те. Çурта лаплатса сӳнĕ пек кĕçех пирĕн пурнăçăн çутă кунĕ те пĕтет... – хӳхлерĕç ĕсĕклесе.

Тепĕр куннех инкек. Аннен пиччĕшĕ Константин Константинович Флуг пурнăçран уйрăлчĕ. Нумай та вăхăт иртмерĕ, аттене сухатрăмăр.

– Ах, а-а-ах... А-а-а! – тесе асапланса вилчĕ.

Çав хăрушă сасă кашни кун хăлхара янăрама тытăнчĕ. Тĕлĕкре те аттене куратăп.

Февраль уйăхĕн пуçламăшĕнче кукамай, Елизавета Дмитриевна Флуг, вырăнпах выртма пуçларĕ. Калаçайми пулчĕ. Акă пĕр кунхине унăн пӳлĕмне кĕтĕм. Вăл унччензиллех хускалми выртать.

Кукамай, кукамай тетĕп, эсĕ çывăратăн-и? – терĕм шăппăн ун умне пĕшкĕнсе.

Куçĕсем çурма уçă пулнине курса, сывлăшĕ тухманнине туйса алăпа çамкине сĕртĕнтĕм. Тимĕр юпа пекех сип-сивĕ вăл. Шикленсе ӳкрĕм. Каялла чакрăм та пӳлĕмрен тухса тартăм. Анне патнелле утрăм. Кукамай пирĕнтен ĕмĕрлĕхех кайнине хыпарларăм.

– Тинех лайăх ĕнтĕ ăна. Хырăм выççи, сивĕ хăратмасть текехрен... Ывăлăм, малашнехи пурнăçшăн ан пăшăрхан... Кĕçех эпир те кукаму патне кайăпăр. Шантарсах калатăп, унта ырăрах, – калаçрĕ вăйсăррăн.

Çак кунтанпа анне те халсăрланчĕ. Вырăн çине епле выртнă, çаплипех выртать.

– Ывăлăм, пĕлетĕн-и, сывлама та вăй кирлĕ иккен... Темĕн, паянтан нумай пурăнасси пулмастех, – терĕ хăйалти сассипе.

Ытлари кун юнашар пӳлĕмре пурăнакан Вера Григорьевна тăван патне çитсе килес терĕм. Ырăскер вăл. Мĕн пуррине яланах пирĕнпе пайлать. Икĕ уйăх каялла çурчĕ çунса кĕлленчĕ. Ун хыççăн пирĕн пата килчĕ.



Акă вăл пурăнакан пӳлĕм. Алăкне уçрăм. Ах... Вера аппан питне виçĕ пысăк йĕкехӳре кăшлать. Тăпăлтараççĕ кăна. Сасă пулнăран хайхисем ман еннелле сикрĕç... Юрать алăка хупса ĕлкĕртĕм.

Килте 4 виле... Пӳртре холодильник пек сивĕ пулнăран нимĕнле шăршă-маршă та çук. Капла вилесемпе пурăнмалла маррине пĕлетпĕр-ха, анчах вĕсене кам çăва çине илсе кайĕ? Никамăн та вăй-хал çук-çке. Апла пулин те малтанах кукамая мĕнле те пулин пытарас тесе тăрăшрăмăр. Пĕр хĕрарăм пире 125 грамм çăкăрла тата 100 тенкĕлле пулăшма шантарчĕ. Ăна пытарассине систерчĕ. Юратнă çыннăмăра асаплана-асаплана шурă простыньпе чĕркерĕмĕр те унта «Е.Ф» тесе çыртăмăр. Ӳтне ман çуна çине вырнаçтарса хутăмăр, хайхи хĕрарăм ăна туртса тухса кайрĕ...

Тепĕр темиçе кунтан пĕтĕм вăя пухса урама тухрăм çеç, пирĕнтен инçех мар грузовик тăнине куртăм. Ятарлă ушкăн урамри вилесене пуçтарса çав машина çине тиет. Кĕçех пирĕн çуртăн картлашки айĕнче пуçтарăннă вилесене илсе тухма тытăнчĕç. Авă пĕрне çунимĕнĕпех туртса тухрĕç. Кукамая палласа илтĕм. Чĕре çурăлса тухатчĕ. Ара, шаннă хĕрарăм пире улталарĕ иккен. Юратнă çыннăма вăл масара илсе кайса пытарман, картлашка айне хурса хăварнă.



Аттен шăллĕ, Михаил Федорович Глазунов, çар медицинин академикĕ эмелсем турттаракан шоферсене хăйĕн çемйине, пиччĕшне, йăмăкне, амăшне тупса пама тархасланă.

– Эсир таçта та çитетĕр. Тен, сасартăк тĕл пулсан, илсе килĕр вĕсене ман пата, – тенĕ.

## Ял шкулĕнче

1942 çулхи март уйăхĕнче эпĕ ун патне лекрĕм... Пĕр уйăх çар госпиталĕнче сиплерĕ вăл мана. Хыççăн пĕр яла вырнаçтарчĕ. Аннешĕн çав тери тунсăхланăскер тӳрех çыру çырма лартăм. Кашни кун киле хыпар яратăп. Анчах аннерен пурĕ те 2 хут хурав çеç илтĕм.

«Пĕртен-пĕр юратнă ывăлăм. Эсĕ маншăн хĕвел... Яланах, кашни кун, кашни минутра сан пирки шухăшлатăп. Тунсăхлатăп. Çапах та эсĕ тутă хырăмпа пурăнни савăнтарать мана. Сана питĕ курас килекен пулчĕ. Юрать кайран эсĕ кунтан. Унсăрăн паянхи кун та хам пекех выçă ларăттăн. Кирек мĕнле пулсан та... ан ман мана. Чуптăватăп...»

«...Илюшенька, пĕлетĕн-и, ручка тытма та вăй-хал кирлĕ иккен. Анчах эсĕ маншăн ан пăшăрхан. Санăн сывлăху çеç пултăр. Малашне те çырсах тăр. Çырăву хавхалану çеç кӳрĕ яланхиллех...»

Урăх... урăх аннерен хыпар пулмарĕ. Вăл выçăпа вилнĕ çинчен пĕлсен... йăлтах вăйран кайрăм.

– Анне, аннеçĕм, сана унччензиллех юратăп, – тесе вĕçĕмсĕр пăшăлтатрăм.

Блокада хыççăн вара тытăнчăклăн калаçа пуçларăм. Ял шкулĕнче те хамран хам, ыттисенчен вăтанса учитель ыйтăвĕсене хут çине çырса хурав пама тытăнтăм. Вĕрентекен доска умне кăларсан пушшех аванмарланатăп. Пĕр хĕрелсе, пĕр шуралса каятăп. Чĕтреме те еретĕп. Чи тĕлĕнмелли – манран никам та кулмасть. Пурте ăнланса пулăшма тăрăшаççĕ.

Пĕр кунхине ман пата аслă класра вĕренекен арçын ача пырса тăчĕ. Кусран шăтарасла пăхнă хыççăн:

– Илюша, сана кам та пулин кӳрентерсен, тӳрех мана пĕлтер. Эпĕ ун пеккисене самантрах вырăна лартăп. Халĕ вăрçă кĕрлет. Пурин те пĕр-пĕрне ăнланса, пулăшса пымалла. Çавăнпа та пирĕн тăрăхра çак нушана ăнланаççĕ. Сана, ют тăрăхран килнĕскере, кӳрентермеççĕ-ши тесе ыйтса пĕлес терĕм, – палăртрĕ хăй шухăшне хайхискер.

– Çу-у-ук... Ун пек пулман. Кунта хама тăван тăрăхри пекех туятăп, – терĕм шăппăн çеç.

Пĕр кунхине шкулта уяв пулчĕ. Каç енне çеç салантăмăр пĕлӳ çуртĕнчен. Кил еннелле утатпăр. Юлташсене амăшĕсемпе кукамăшĕсем, асламăшĕсем урама кĕтсе илме тухнă. Вĕсем тĕпренчĕкĕсене ытама илсе пит çăмартисенчен чуптунине пăхма маншăн питĕ йывăр пулчĕ. Унтан пĕри:

– Авă, çав арçын ача тăлăхскер... Ашшĕ те, амăшĕ те çук унăн. Ленинградран килнĕ те, вăрçă чарăничченех кунта пурăнать. Халĕ вăл пĕр кинемей патĕнче хăтлăх тупнă. Питĕ шел ачана, – терĕ палламан хĕрарăм ассăн сывласа.

Сăмахĕ ман пирки пулнине ăнлантăм. Пит тăрăх вĕри куççуль юхрĕ. Чăнах, хĕрарăмăн сăмахĕсем чуна пырса тиврĕç-çке! Тунмастăп, юратнă аннем ытамĕнче пулса ачашланас килет. Анчах эпĕ ăна ĕмĕрне те курас çук, ĕмĕрне те...

Эвакуаци хыççăн тăван Ленинграда таврăнтăм. Унăн ишĕлчĕк урамĕсемпе утса пынă чухне куçран куççуль тухрĕ. Хамăр пурăннă çуртăн картишне кĕрсен такам:

– Илюшенька! Илюшенька! – тесе хыттăн кăшкăрчĕ.

Кӳршĕ хĕрарăмĕ. Аннене курнăнах туйăнса кайрĕ... Ӳнер шкулне вĕренме кĕтĕм. Шăп та лăп ӳкернĕ чухне лăпкăлăх авăрĕнче ишме тытăнтăм.

*Элиза ВАЛАНС хатĕрленĕ.*

Художник ӳкернĕ сăнсем: хĕрĕ Вера, ывăлĕ – Ваня.

**АННЕНЕ ПУЛĂШАТĂП**

## Тăпăрчă кексĕ

**Кекс валли 200 грамм тăпăрчă, 2 кашăк хăймапа услам çу, 2 çăмарта, 1 стакан çăнăхпа сахăр, çур чей кашăкĕ апат соди, кăштах тăвар кирлĕ.**



Ирĕлтернĕ услам çăва, кăштах уксус ярса сӳнтернĕ апат содине ытти çимĕçсемпе хутăштарса лайăх пăтратăр. Чустана формăна ярса 180 градус таран хĕртнĕ духовкăна лартăр. Кекс хăмăрланиччен тытăр.

## «Зодиак» салат

**Çимĕç валли 500 грамм шампиньон /консервлани те юрать/, 1 пуç сухан, чăх какайĕ /кăкăр тĕлĕнчи/, 2 хăяр, 2 çăмарта, 1 кĕленче консервланă куккурус, кăштах майонез, тăвар кирлĕ.**

Кăмпана вакламалла, кăштах тăвар хушса пысăках мар çулăм çинче ăшаламалла. Çу яриччен темиçе минут хупласа пăшăхламалла. Пухăннă сĕткене сăрăхтарса илмелле.

Вĕтĕ туранă сухана çу янă çатмара ылтăн тĕс çапиччен ăшаламалла. Чăх какайне, çăмартапа хăяра тăваткалласа вакламалла. Пур çимĕçе те сĕткенне сăрăхтарнă куккурус, майонез, тăвар хушса лайăх пăтратмалла. Салат хатĕр!

## Сыр кукăлĕ

**Кукăль валли 2 çăмарта, 1 стакан йӳçĕтнĕ сĕт, çур чей кашăкĕ апат соди, çавăн чухлех тăвар, 250 грамм хытă сыр, 200 грамм сосиска, ветчина е кăлпасси, услам çу, вĕтетнĕ сухари е маннă кĕрпи кирлĕ.**

Çăмартапа тăвара, йӳçĕтнĕ сĕтпе çăнăха хутăштармалла. Хутăш çăралăхĕпе икерчĕ чусти евĕр пулмалла.

Сыра теркăпа хырмалла, кăлпассине вĕтетмелле. Чустана хушмалла.

Хатĕр хутăша услам çу сĕрсе манна кĕрпи сапнă противене ямалла. Кашăкпа тикĕслемелле. 200 градус таран хĕртнĕ духовкăна лартса 25-30 минут /хĕреличчен/ тытмалла. Апачĕ тутлă пултăр!

## Сĕнӳсем

**Кил-çурта тирпейленĕ чухне çак ĕçе çăмăллатакан вăрттăнлăхсене шута илме сĕнетпĕр.**



➢Тусан ларакан вырăнсене кĕпе-йĕм кондиционерĕпе йĕпетнĕ çĕтĕкпе сăтăрăр. Ун пек вĕсем час вараланмĕç, тусан та икĕ хут сахалтарах пухăнĕ.

➢Кукăль-пӳремеч пĕçернĕ хыççăн формăна – тăварпа, кайран хут алшăллипе сăтăрăр. Савăт çăмăллăнах тасалĕ.

➢Диван çинчи таса мар вырăнсене 1 кашăк апат содинчен, стаканăн пĕрре виççĕмĕш пайĕ чухлĕ уксусран, вĕри шывран тата 1 кашăк кĕпе-йĕм çумалли порошокран хатĕрленĕ хутăшпа тасатма пулать. Дивана уçăлтарас тесен апат содине çӳхе сийпе сапса темиçе сехет тытăр та пылесоспа тасатăр.

➢Шыв кранне кукăль-çăмах пĕçернĕ чухне усă куракан ятарлă хутпа сăтăрсан вăл чылай вăхăт вараланмĕ.

➢Чей-кофепе вараланнă куркана тасатма уксуспа шыв хутăшĕ пулăшать. Вĕсене пĕр пек виçепе хутăштарса савăта ярса хумалла. Пĕр сехетрен губкăпа çумалла.

**СЫВЛĂХ**

# Пыр шыççан

Ангинăпа халăх меслечĕсемпе усă курса та кĕрешме пулать. Унтан кĕске вăхăтрах хăтăлас тесен пыра апат соди хушнă шывпа чӳхемелле. Пĕр стакан лĕп шыва 1 чей кашăкĕ сода кирлĕ. Пĕр тумлам йод хушсан усси витĕмлĕрех те пулĕ. Шĕвекпе пыра кашни 1 сехетре чӳхĕр.

Çавăн пекех пыл сĕрнĕ лимон татăкне чăмлани усăллă. Цитрус çимĕçĕнче эфир çăвĕ, бактерисемпе кĕрешекен япала нумай. Лимонри С витамин вара иммунитета çирĕплетме пулăшать.

Ангинăпа кĕрешмелли чи анлă сарăлнă халăх меслечĕ – пиçнĕ çĕрулми пăсĕпе сывлани. Çак вăхăтра пуçа алшăллипе витмелле. Вĕри пăспа 5 минутран ытла сывлама юрамасть. Ку процедурăна кашни 3-4 сехетре пурнăçламалла. Унсăр пуçне çĕрулми нимĕрĕнчен компресс хатĕрлесе пыр çумне çыхма юрать. Урана типĕ горчица янă ăшă нуски тăхăнсан чире тата хăвăртрах парăнтарма май килĕ. Анчах температура пысăк чухне ку меслет юрăхсăр.

Шăнса пăсăлас темесен сивĕ çанталăкра ăшăрах тумланма, иммунитета çирĕплетме тăрăшăр. Чиртен сиплениччен сывлăха маларах сыхлани лайăхрах-çке.

**ХАМĂР ХУШĂРА**

# Çынсемпе хутшăнасси саншăн чăрмав е савăнăç?

### Тест



Ыттисемпе хаваспах хутшăнатăн-и эсĕ? Кĕске вăхăтрах çĕнĕ тус-юлташ тупма пултаратăн-и? Кирек мĕнле ларутăрура та хăвна аван туятăн-и?

Хуравсенчен хăвна çывăхраххине суйла та вĕçĕнчи тест пĕтĕмлетĕвĕпе паллаш.

**1. Сана уява тăтăшах йыхравлаççĕ-и?**

а. Пĕлĕшсен, тус-юлташăн, çывăх çынсен пĕр уявĕ те мансăр иртмест – 3 балл.

ă. Яланах мар – 1 балл.

б. Ниçта та чĕнмеççĕ, эпĕ шавлă мероприятисене кăмăлламаннине пĕлеççĕ – 0 балл.

**2. Палламан çынсен ушкăнне çăмăллăнах кĕрсе каятăн, хăвна унта шыври пулă пекех туятăн.**

а. Ку манăн характера палăртакан уйрăмлăх – 3 балл.

ă. Кăмăл-туйăмран килет, кун пекки вара сайра хутра çеç пулкалать – 1 балл.

б. Çук. Мана уçăмсăрлăхшăн тата ыттисемпе хутшăнманшăн тантăшсем те кăмăлламаççĕ – 0 балл.

**3. Çак самантра хăв ыттисен тимлĕхĕнче пулнине туятăн…**

а. Питĕ лайăх. Ку мана килĕшет – 3 балл.

ă. Хăвна аван мар туятăн, анчах та малалла мĕн пуласси кăсăклă – 1 балл.

б. Çĕр тĕпне анса кайма хатĕр – мĕн тупăн вĕсем ман çинче? – 0 балл.

**4. Эсĕ палламан аудитори умĕнче калаçатăн. Çак вăхăтра хăвна мĕнле туятăн?**

а. Кăштах хумханатăп – 0 балл.

ă. Вăтанатăп, çакă ăнланмалла мар шикленĕве куçать – 1 балл.

б. Лăпкă туятăп – 3 балл.

**5. Ыттисене савăнтарма, култарма юрататăн-и эсĕ? Ушкăнри çынсен тимлĕхне хăвăн çине куçарма пултаратăн-и?**

а. Суймасăрах хуравлатăп: çапла. Урăхла пулма та пултараймасть – 3 балл.

ă. Пĕтĕмпех ушкăнра камсем пулнинчен тата манăн кăмăл-туйăмран килет – 1 балл.

б. Хама кам та пулин тимлĕх уйăрнине юратмастăп – 0 балл.

**6. Палламан çынран çул кăтартма ыйтасси йывăр-и?**

а. Хам чăнах та тĕрĕс çултан аташса кайнине ăнланса илсен çеç ыйтма пултаратăп – 0 балл.

ă. Ыйтатăп-ха, анчах çав вăхăтра хама аван мар туятăп – 1 балл.

б. Çийĕнчех ыйтатăп. Маншăн палламан çынпа калаçасси йывăр мар – 3 балл.

**7. Ушкăнра шӳтсем каласа кăтартма юрататăн-и?**

а. Çапла. Ун чухне лару-тăру лайăхланать, хавасланать – 3 балл.

ă. Хăш чухне. Меллĕ самантра – 1 балл.

б. Хам каласа кăтартма юратмастăп, ыттисене вара кăмăлтан итлетĕп – 0 балл.

**8. Сан пирки: «Сăмахшăн кивçене каймасть», – теме пулать-и?**

а. Паллах – 3 балл.

ă. Лару-тăруран килет – 1 балл.

б. Ку ман пирки мар – 0 балл.

**9. Палламан çынсемпе тĕлпулма каймалла тăк унта эс пĕлекен пĕр çын та пулин пулни кирлĕ-и?**

а. Çапла. Çумра пallанă çын пулсан хăвна çирĕпрех туятăн – 0 балл.

ă. Яланах мар. Анчах хăш чухне ку чăнах та кирлĕ – 1 балл.

б. Çук. Тĕлпулу пирки çеç шухăшлатăп – 0 балл.

**10. Эсĕ пĕр лайăх каччăпа /хĕрпе/ паллашнă, анчах та вăл тĕл пулăва килме килĕшмен тейĕпĕр. Кун пирки мĕн шухăшлатăн?**

а. Хăрушши нимĕн те çук. Урăх çĕрте, тепĕр çынпа ăнĕ – 3 балл.

ă. Мĕнех, кун пекки те пулма пултарать – 1 балл.

б. Текех нихăçан та, никама та тĕлпулăва чĕнмĕп – 0 балл.

### Пĕтĕмлетӳ

*10 балран сахалрах.* Çирĕплетсех калама пулать: санпа хутшăнма ансат мар. Анчах та ку эсĕ пачах та çынсене юратманнине пĕлтермест. Эсĕ хăйнеевĕрлĕ, шухăшсен авăрĕнче пурăнма кăмăллакан çынсен йышне кĕретĕн. Çакă ыттисене сана юратма, хисеплеме пĕрре те чăрмантармасть.

*11-20 балл.* Эсĕ – иккĕленчĕк кăмăллă çын. Чылай чухне хăвна сăпайлăн тытатăн, хăш чухне вара ыттисемпе çăмăллăнах хутшăнма пултарнинчен тĕлĕнетĕн. Шел те, çакă яланах пулмасть çав, кăмăлунтан та килмест. Сана ятарлă турилккене хумалли пĕр-пĕр чаплă апатçимĕçпе танлаштарма пулать – эсĕ те хăвна пур ушкăнра та кирлĕ пек тытаймастăн. Саншăн ыттисемпе çăмăллăнах хутшăнма хистекен япала /çын, лару-тăру/ пулни пĕлтерĕшлĕ.

*21-30 балл.* Эсĕ кирек кампа та уççăн, çăмăллăн калаçатăн. Ушкăнпа чухне пурте сана тимлĕх уйăраççĕ. Кашнинех килĕшме тăрăшатăн эсĕ. Анчах ку ыттисен çумне çыпçăнни пек курăнмасть, пĕтĕмпех вырăнлă пулса тухать.

Хирте апат тутлă теççě




# Сканворд




## 65-ре Пулар, Юбилейпе саламлар!

Çак уйăхра «Тетте» журналпа «Тантăш» хаçата вулакан ачасен юратнă авторě, тěрлěрен сăмахкаçмăшпа пуçватмăшăн чăн-чăн маçтăрě Микул Пулар / Николай Георгиевич Краснов/ сăвăç 65 çул тултарать.

Вăл РФ Журналистсемпе Писательсен Союзěсен членě. Йěпреç районěнчи Туçа ялěнче çуралнă. Вăтам шкул хыççăн салтакра пулнă. Тěрлě çěрте вăй хунă. Мускаври М.Горький ячěллě Литература институтěнче вěреннě, «Капкăн» журналта чěрěк ěмěре яхăн тăрăшнă.

## Пурте пěр пекех вěсем, вырăнне лартма пěлсем

Çакăнта кушаксене хăйсен вырăнне лартса тухсан Пьер Ришар вылянă кинокамитěн ятне вуласа пěлме пулать.




# Сăмахкаçмăш



**Сылтăмалла:** 1. Килти кайăк-кěшěк. 5. Пичетлемелли машинкăн пайě. 9. Пысăк попугай. 11. Ăна алла тăхăнса çапаççě. 12. Пăшал хатěрě. 13. Красноармейски районěнчи ял. 15. Шутсăр çăткăн пулă. 16. Укçа хутаçě. 17. Тапăну. 19. Уншăн Троя вăрçи пуçланнă. 21. Страус «тăванě». 22. Унта хоккейла выляççě. 24. Йывăç тěмě. 26. Ěне мар. 28. Чăваш спортсменки, Олимп чемпионě. 33. Венгр. 34. Машина пайě. 35. Пěрремěш хěрарăм. 36. Элěк районěнчи çырвăçă. 37. Чапа тухнă чура.

**Аялалла:** 2. Кěвěçў. 3. Хурткăпшанкă. 4. Макарон юлташě. 5. Тинěсри «кимě». 6. Сасса вăйлатмалли хатěр. 7. Çěнě çул уйăхě. 8. Вăл утрав çинче карате пуçланнă. 10. Типографи шрифчě. 13. СССРта пěрремěш таран тунă вěçевçěсенчен пěри. 14. Пěрремěш хěрарăм-космонавт. 18. Вăл пилěк авсан тухать. 20. Тўпери «турилкке». 21. АПШри штат. 23. Тěвесен ушкăнě. 25. Йěс япалана çутатакан. 27. Раççей физикě, академик. 29. Икспа зет тусě. 30. Медаль мар. 31. Карттăсен пуххи. 32. Атă-пушмак тасатмалли хатěр.

## КУЛĂШ

Пěр хěрача кўрше касăнă та:

– Анне чирлесе ўкрě, сирěн хăмла çырли варенийě çук-ши? – тенě.

– Эй, Турăçăм! Пур, пур. Сана ăна ăçта ярса памалла-ши: стакана е турилккене?

– Çук, ниçта та ан ярăр. Варенине эпě кунтах çисе каятăп.

* * *

Тумтир шкапěнче кěве амăшěне унăн пěчěк ывăлě кěрěк кăшласа лараççě. Ывăлě амăшěнчен:

– Анне, манăн вěçес килет. Юрать-и?

– Çук, ывăлăм. Вěçсе çўриччен кěрěке ытларах кăшла, – тет амăшě.

– Шел, эпě ěнер пўлěме тухса вěçрěм. Кил хуçисем хваттер тăрăх алă çупса чупса çўрерěç ман хыççăн…

*Петя.*

Елчěк районě, Аслă Елчěк шкулě.

4 627126 799906